27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ОКТЯБРЬ 18 ЮНКУН 206(6701) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Еçсыни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлă тата лайăх ĕçленĕшĕн хуçалăхĕсене малта пыракан республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Етĕрне районĕ тăрăх

79. «Волкан» колхоз (председателĕ Миронов юлташ, пуçламăш комсомол организацийĕн секретарĕ Михайлова юлташ). Колхоз тырра вăхăтра вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

80. «Восток» колхоз (председателĕ Кондратьев юлташ). Колхоз тырра вăхăтра вырса пуçтарнă, вĕсене чи лайăх вăхăтра çапса пĕтернĕ, государствăна тырă срокчен парса татнă.

81. Крупская ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ефремов юлташ). Вăл тырăсене вăхăтра вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă срокчен парса татнă.

Сыхăну аппарачĕ тĕрĕс те йĕркеллĕ ĕçлемелле

Пирĕн государствăн ĕçĕ хал-кал пулса пытăр тесен, фронтпа тыл хушшинчи сыхăну çирĕп пултăр тесен, сыхăну аппарачĕ сехет механизмĕ пек тĕрĕс те йĕркеллĕ ĕçлени кирлĕ. [illegible] аппарат вăл — сыхăну аппарачĕ: почта, телеграф, телефон, радио пулса тăрать.

Çак аппаратăн ĕçĕ государство ĕçĕпе, тĕрлĕ организацисен ĕçĕпе кăна мар сыхăнса тăрать. Вăл аппаратăн ĕçĕ пĕтĕм халăх пурнăçĕпе, апла пулсан кашни çынăн пурнăçĕпе тата ĕçĕпе сыхăнса тăрать. Тылри рабочи, колхозник е интеллигент, хăйĕн ăшă кăмăлĕсемпе шухăшĕсене калаçа парса, хăйĕн фронтри тăванĕ патне çыру çырать пулсан, вăл çав çырăва сыхăну органĕсене шанса парать. Е тепĕр майлă та. Фронтри паттăр боец хăйĕн вăрçăри хастарлă ĕçĕсем çинчен тылри тăванĕсене пĕлтерме шутлать пулсан, вăл çыру е телеграмма çырать, вĕсене сыхăну аппаратĕнче ĕçлекен юлташсене шанса парать. Çапла майпа фронтпа тыл боецĕсем пĕр-пĕринпе сыхăнса тăраççĕ, ĕçре е кĕрешӳре паттăр пулма пĕр-пĕрне хавхалантараççĕ.

Çакна шута илсен, сыхăну работникĕсем мĕнле хисеплĕ те ответлă ĕç туса пынине кирек кам та уçăмлăн ăнлапса илме пултарать. Сыхăну конторинчи кашни работник, — çыру илнĕ çĕрте ĕçлет-и вăл, телефон станцинче е телеграфра ĕçлет-и, — кунне вуншар та çĕршер çынпа калаçать, вĕсен кăмăлне пурнăçа кĕртет. Çакă кăна та ĕнтĕ сыхăну работникĕ çине пысăк ответлăх хурать, вĕсене çавăрăнăçуллă та тараватлă пулма, тĕрĕс кăмăллă та тӳрĕ чĕреллĕ пулма, лăпкă та çирĕп пулма, ĕççыннисемшĕн чуна парса ĕçлеме хушать.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче сыхăну учрежденийĕсемпе работникĕсен ĕçĕ чылай пысăкланчĕ, вĕсен сахал мар йывăрлăхсене çĕнтерсе пымалла пулчĕ. Çапах та сыхăну работникĕсем хăйсен задачине чыслăн, Тăван çĕршыв хушнă пек пурнăçа кĕртсе пыма пултарчĕç, пурнăçа кĕртсе пыраççĕ те. Паллах ĕнтĕ, хăйĕн ĕçĕн ответлăхне яланах туйса тăракан, унăн ĕçĕ çĕршер те пиншер ĕççыннисен пурнăçĕпе сыхăнса тăнине ăнланса, асра тытакан сыхăну работникĕ пĕтĕм вăя парса, чунтан тăрăшса ĕçлемесĕр тăма пултараймасть. Вăл çырусемпе посылкăсене, укçа-тенке тата телеграммăсене вăхăтра та тĕрĕс ăсатать, телефон станцийĕнче хăвăрт та тимлĕн ĕçлет. Çакăн пек лайăх ĕçлекен сыхăну учрежденийĕсемпе работникĕсем пирĕн республикăра та сахал мар.

Анчах эпир кунта, пуринчен ытла, сыхăну учрежденийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсем çинчен чарăнса тăрасшăн, мĕншĕн тесен халĕ пире çитĕнӳсемпе мухтанса ларни мар, çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсене йăлтах пĕтерсе, сыхăну ĕçне май пур таранах лайăхлатни кирлĕ. Çитменлĕхсем вара республикăри сыхăну учрежденийĕсен ĕçĕнче чылай палăраççĕ.

Илер, сăмахран, телефонпа телеграф ĕçне. Телефон лайăх ĕçлени мĕнле вырăн йышăнса тăнине пуриншĕн те паллă. Телефон вăл — чи хăвăрт сыхăнма май паракан, çавăнпа та чи усăллă сыхăну аппарачĕ пулса тăрать. Чылай çĕрте вара çак аппарат кирлĕ пек ĕçлеймест-ха.

Вăрмар районĕнчи 8 ялсоветĕнче, Тăвай районĕнчи 6 ялсоветĕнче, Шăхасан районĕнчи 6 ялсоветĕнче [illegible] Шупашкар хулинчи телефон станцийĕ [illegible] Телефон трубкине çĕклесе 5—10 минут кĕтсе ларатăн [illegible] Çакă пек [illegible] çитменлĕхсем Канашра, Çĕрпӳре тата ытти хуласенче те пулкалаççĕ. Çакă ĕнтĕ телефонпа телеграф работникĕсем хушшинче ĕççыннисен ыйтăвĕсем çине чуксăррăн пăхакан, хăйсен ĕçĕн ответлăхĕпе хисеплĕхне ăнланса илмен юлташсем пурри çинчен калать. Çӳлте асăннă йĕркесĕрлĕхсем çинчен республикăри сыхăну Управленийĕ пĕлет, анчах вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмасть.

Илер тата почта конторисен ĕçне. Çырусемпе укçа-тенкĕ çӳретес ĕçе. Шупашкар районĕнчи пĕр-пĕр ялтан е Канаш хулинчен çыру Шупашкар хулине вунă кун хушши килет пулсан, республикăри хаçатсем Шупашкар хулинчи вулакансем патне икĕ-виçĕ кун иртсен тин çитеççĕ пулсан, почта конторисенче марка илес, укçа-тенкĕ илес, телеграммăсем ярас текенсен часчасах нумай вăхăт хушши черетре кĕтсе тăма лекет пулсан, çаксене вара йĕркеллĕ теме пулать-и-ха? Паллах, çук. Ку çеç те мар-ха. Хăшпĕр чухне почта работникĕсем хушшинче таса мар чĕреллĕ, кукăр алăллă çынсем те тĕл пулаççĕ. Сăмахран, Ишлей районĕнчи сыхăну конторин начальникĕ пулнă Гордеев куçарма панă укçа-тенке хăй кăсъине сахал мар чикнĕ, кунти почта агенчĕ пулнă Шиманов посылкăсенчи япаласене кăларса илме хăтланнă. Чăн та, сыхăну работникĕн чысне варалакан çак çынсене тивĕçлипе ответ тыттарнă. Анчах вĕсем пек хăтланакан çынсем сыхăну учрежденийĕсенче татах та пулас пулсан, çакă вара ĕççыннисене хытă кӳрентернĕ пулĕччĕ. Çавăнпа та ун пек йĕркесĕрлĕхсене çине тăрса пĕтерсе пырас пулать.

Сыхăну аппарачĕ лайăх ĕçлетĕр тесен, унта ĕçлеме çынсем çителĕклех тупса лартни, вĕсен квалификацине тăтăшах ӳстерсе пыни кирлĕ. Калас пулать, сыхăну Управленийĕпе районсенчи сыхăну пайĕсем халĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Сыхăну работникĕсен союзĕн Обкомĕпе вырăнсенчи организацийĕсем ĕç дисциплинине çирĕплетес, ĕç пахалăхне лайăхлатас енĕпе сыхăну работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва начар сарса пыраççĕ.

Асăннă çитменлĕхсем, тепĕр енчен, хăшпĕр ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем сыхăну аппарачĕн ĕçĕпе сахал интересленнине те кăтартса параççĕ. Çакă ĕнтĕ пачах тĕрĕс мар. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен районсенчи сыхăну конторисен ĕçĕпе куллен те тăтăшах интересленмелле, вĕсен ĕçне контроллесе тăмалла, кирлĕ чухне пулăшу памалла. Сыхăну конторисенчи партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен сыхăну работникĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе куллен туса пымалла.

Пирĕн Тăван çĕршыв халĕ, фашистла нимĕç захватчикĕсене татăклăнах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, пĕтĕм вăйпа пултарулăха хурса ĕçлет, кĕрешет. Сыхăну работникĕсен хисеплĕ задачи—çак ĕçпе кĕрешӳре чыслă вырăн йышăнасси, харпăрхăйĕн ĕçне фронт хушнă пек, çĕршыв хушнă пек туса пырасси пулать.

КРЫЛОВ КУНĔСЕМ ТĔЛНЕ ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ ТУХАÇÇĔ

Государствăн «Искусство» ятлă издательстви И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул тултарнă тĕле çĕнĕ кĕнекесем кăларать. Аслă баснописецăн драмăллă произведенийĕсене пĕр кĕнекене пухса пичете панă. Кĕнекене «Илья Богатырь», «Проказница», «Модная лавка» тата ытти пьесăсем те кĕнĕ. Кĕнекере çавăн пекех Крылов драматургийĕ çинчен калакан библиографиллĕ статья та пулать.

Баснописецăн Брюлов художник çырнă портретне массăллă тиражпа кăлараççĕ. Крылов кунĕсем тĕлне писателĕн пурнăçĕпе творчествине кăтартса паракан плакат пичетленсе тухать. (ТАСС).

Республикăри колхозсен Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăвĕ

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА СРОКЧЕН ТЫРĂ ПАРСА ТАТАССИШĔН ПЫРАКАН ĂМĂРТĂВĔ

(1944 ÇУЛХИ ОКТЯБРĔН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ ИЛНĔ СВЕДЕНИСЕМ ТĂРĂХ)

Районсем	Тырă панă (процентпа)
Вăрнар	101,7
Чурачăк	98,5
Шупашкар	98,1
Калинино	98,0
Вăрмар	95,5
Элĕк	95,2
Сĕнтĕр	94,3
Çĕрпӳ	93,5
Ишлей	92,6
Красноармейски	91,0
Куславкка	90,6
Муркаш	90,4
Советски	90,3
Йĕпреç	87,1
Октябрьски	86,3
Улатăр	86,2
Етĕрне	86,2
Пăрачкав	85,3
Елчĕк	84,0
Тăвай	83,4
Шăхасан	83,3
Хĕрлĕ Чутай	82,9
Сĕнтервăрри	82,0
Первомайски	81,2
Канаш	78,7
Çĕмĕрле	77,5
Комсомольски	77,1
Чăкăлсен	71,1
Кувакино	69,4
Шăмăршă	69,2
Пĕтĕмпе	87,7

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă

ЕЛЧĔК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Украина колхозникĕсем чĕнсе калание кашни колхозрах пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яврĕç. Сăрьелĕнчи «Марс» колхоз председателĕ А. Гаязов паян çĕнĕрен пĕлтернĕ тăрăх, çав колхозăн членĕсем Хĕрлĕ Çар фондне 3.000 пăт тырă пама йышăннă. Вăл шутран 800 пăтне хатĕрлев пунктне леçнĕ те ĕнтĕ. «Марс» колхозпа ăмăртакан Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Зайцев юлташ) Хĕрлĕ Çар фондне 2.400 пăт пама йышăннă, çав шутран 720 пăтне государство складне хывнă. Вăрăм Хăвари «Хунав» колхоз (председателĕ Казначеев юлташ) Хĕрлĕ Çар фондне 1.800 пăт парать. Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси ытти колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе пырать.

Н. ВОЛКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КУСЛАВККА, октябрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса тата Украина колхозникĕсем чĕнсе калание тивĕçлипе ответлес тесе, пур колхозсем те Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн хутшăнаççĕ. [illegible]

Н. САВЕЛЬЕВ.

* * *

...не 1.500 пăт тырă пама тата çак тырра октябрĕн 20-мĕшĕччен хатĕрлев пунктĕсене леçсе пĕтерме йышăннă.

— Кăçал эпир хамăра пурăнмалăх та, Хĕрлĕ Çар фондне памалăх та тырă пухса илтĕмĕр,—теççĕ колхозниксем. Чăн та, кунта аванс шучĕпе кăна ĕçкунĕ пуçне 1,5 килограмм валеçнĕ.

«Правда» колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 800 пăт парать. «Победа» колхоз 200 пăт панă.

Ытти колхозсенче те, Украина колхозникĕсем чĕнсе калание ырласа, Хĕрлĕ Çар фондне тырă хываççĕ. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, паянхи кун тĕлне пурĕ 16.000 пăт пама йышăннă.

М. ОГОРОДНИКОВ.

* * *

ЙЕПРЕÇ, октябрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 33 колхоз государствăна обязательствăсем тăрăх тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене парса татрĕç. Украина колхозникĕсем чĕнсе калание сӳтсе-явнă хыççăн нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама йышăнаççĕ. Сăмахран, «Большевик» колхоз 145 пăт, Крупская ячĕпе тăракан колхоз 400 пăт, «Молния» колхоз 63 пăт парать. Районри колхозниксем çак ик-виçĕ кун хушшинче Хĕрлĕ Çар фондне 6.000 пăтран кая мар тырă парасса кĕтеççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса

ВĂРМАР, октябрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). [illegible] зательство тăрăх тырă парса татнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама йышăнаççĕ. «Анис» колхоз 720 пăт, Кивĕ Вăрмарти «Большевик» колхоз 1080 пăт, Киров ячĕпе тăракан колхоз 600 пăт, «Дружба» колхоз 720 пăт, «15 съезд ВКП(б)» колхоз 900 пăт пама пулчĕç. Ытти колхозсенче те ку ĕç анлăн сарăлса пырать. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн район Хĕрлĕ Çар фондне пурĕ 25.000 пăт тырă парать.

Нумай колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. «Свобода» колхоз (председателĕ Иванов юлташ), ăмăртăва хутшăнса, кĕрхи çĕртме туса, авăн çапса пĕтерчĕ, государство умĕнчи пур парăмсене те парса татрĕ. Паянхи кун [illegible] колхоз паянхи кун тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне 420 пăт панă, тата 300 пăт тырă паянранах ăсатать. «Заря» колхоз та Хĕрлĕ Çар фондне 420 пăт пачĕ.

— Октябрьти революци 27 çул тултарнă уява пирĕн çĕршыв савăнăçлă кунсенче, Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳсем тунă тапхăрта, кĕтсе илет. Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшасси—пирĕн чыслă та таса тивĕç,—теççĕ колхозниксем. Çак чĕререн калакан сăмахсене ĕçпе çирĕплетессишĕн колхозниксемпе колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра колхозсем çывăхри 4—5 кун хушшинче хатĕрлев пунктне леçсе парасса шантарма пултаратпăр. Колхозсенчен тырă татти-сыпписĕр килсе тăрать.

А. СМИРНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Фермăна хĕле лайăх хатĕрлерĕмĕр

Етĕрне районĕнчи «Красный Октябрь» колхозăн 4 ферма. Эпĕ 4-мĕш çул фермăсен заведующийĕнче ĕçлетĕп. [illegible] çулсеренех тултарса пырать.

План тăрăх пирĕн фермăра мăйракаллă шултăра выльăхсем 65 пуç пулмалла, паянхи куна 85 пуç шутланать, сыснасем 110 пуç пулмалла, вĕсем пурте пур. Сурăх фермине те планпа пăхнă чухлĕ сурăх пур.

Паттăр Хĕрлĕ Çара вăхăтра тата кирлĕ таран аш-какай, сĕт-çу памалла. Государствăна сĕт памалли плана сентябрь уйăхĕнче 100 процент пурнăçларăмăр, халĕ оборона фондне пама тытăнтăмăр. Çавăн пекех эпир, государствăна аш-какай памалли обязательствăна тултарса, 1945 çулхишĕн 20 центнер панă. Çăмарта, çăм парассине те пирĕн колхоз срокра пурнăçларĕ.

Эпир ĕнесем валли ăшă витесем çителĕклĕ таран хатĕрлерĕмĕр, киввисене юсанă. Хĕл каçарма кирлĕ таран апат пухса хунă. 60 тонна тĕрлĕрен курăксенчен, 32 тонна пăракапа йӳçĕтсе силос хывăмăр.

Пирĕн фермăсенче Д. Петрова, Н. Чижова, Е. Ефимова юлташсем уйрăмах тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕхсене вăхăтра шăвараççĕ, çитереççĕ, картасенчи тислĕксене те вăхăтра тасатса тăраççĕ.

Мана Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ иртнĕ çулта кăтартуллă ĕçленĕшĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана 100 процентпех пурнăçласа пынăшăн Хисеплĕ грамота парса наградăларĕ. Çак награда мана выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

А. АФОНЬКИН,
Фермăсен заведующийĕ.

Пĕр ялсоветĕнчи колхозсем

Йĕпреç ялсоветне 6 колхоз кĕрет. Вĕсенчен «Красный Октябрь», «Тымар» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем пур ĕçе те вăхăтра туса пыраççĕ. Вĕсем, государство умĕнчи обязательствăсене тултарса, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх кашни çулах тырă чылай валеçсе параççĕ.

«Тымар» колхоз иртнĕ çул кашни ĕçкунĕ çине 3-шер килограмм тыррăн валеçнĕ, кăçал кунта пĕлтĕрхинчен те ытларах валеçме шутлаççĕ. Анчах «Костер» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем икĕ çул ĕнтĕ ĕçкунĕ тăрăх тырă валеçме пултараймаççĕ. Апла пулин те, çак колхозсенче тырпул тухăçне ӳстерессишĕн тăрăшмаççĕ. Пурне те паллă: кĕрхи çĕртме туни — тырă тухăçне 30—40 процент таран ӳстерет. Çакна «Костер» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсен председателĕсем Артемьевпа Шишкин юлташсем ăнланса илесшĕн мар. «Костер» колхоз кĕрхи çĕртме тума пĕр лаша та уйăрман.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе çак кунсенчех вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Д. ВАСИЛЬЕВ.

СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне Иосиф Виссарионович СТАЛИН юлташа

МУСКАВ, КРЕМЛЬ.

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Чĕрере тулса тăракан кăмăла каласа парса тав тума сăмах тупмашкăн мана питех те йывăр. Хамăн пурнăçри чи ырришĕн: хамăн пĕтĕм пĕлӳлĕхĕмпе тата вăйăмпа халăхшăн ĕçлеме пултарнишĕн, тĕнче историйĕн чи пархатарлă ĕçне хутшăнма пултарнишĕн эпĕ Совет влаçĕ умĕнче, Иосиф Виссарионович, Сирĕн умăрта парăмлă пулса тăратăп. Наукăпа пурнăç чăнлăхĕ патнелле эпĕ çур ĕмĕр ытла туртăннă, халĕ ĕнтĕ, ватлăх кунсем çитнĕ чухне, Сталин генийĕ пирĕн çĕре кирек мĕнле суялăхпа ултавран та, тĕрĕсмарлăхпа пусмăрлăхран та тасатса пынине курма тивĕçлĕ пулнишĕн хама телейлĕ тесе шутлатăп.

Хаклă Иосиф Виссарионович, эпĕ Сире пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăнине, юратнине, Сирĕн ĕçĕрпе тĕлĕнсе савăннине тата [illegible]

Сирĕн Владимир КОМАРОВ.

РСФСР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕ

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ [illegible] воскресникне туса ирттерне. Çавăн пекех воскресникре пурăнмалли çуртсене, общежитисене юсаса йĕркелес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Комсомол организацийĕсемпе пионерсен тимурла командисем нумай ача-пăчаллă çемьесене вутă татма тата килти ытти ĕçсене тума пулăшнă. Свердловскри предприятисемпе промысла артелĕсем воскресникре куллен кирлĕ таварсем планран ирттерсе нумай туса кăларнă. Воскресникне хатĕрленсе ирттернĕ çĕре профсоюзсемпе хуçалăх организацийĕсене анлăн явăçтарнă.

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсенчи советсен исполкомĕсене тата республикăна пăхăнса тăракан хуласен исполкомĕсене, Свердловск горисполкомĕн примерĕ тăрăх, фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе массăллă воскресниксем туса ирттерме сĕннĕ. (ТАСС).

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш преми памалла тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 16-мĕшĕнче РИГА хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, ВАРКАЛЬКРОКС, ВИКУЛИ, ПИНЬТИ, ПЛУДИ, АННАСМУЙЖА, ЛАПСАС, АДИЕНИ, МАЗЦЕНА, СУДМАЛКАЛНС, ДАЛЬЕ, ГАЙСАРАГИ, ТИШИ, ВОЛГУНТЕ ялĕсене тата ЛИЕЛУПЕ, АВОТИ, ДАЛБЕ чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — БОРША хулипе чугун çул станцийĕ, МОЙСЧИУ, ФЕЛШО-ВИШШО, ФЕЛШО-СЭЛИШТЕ, СЕЧЕУ, РОМУЛИ, ТЭЛЕЧ, СУПЛАЙ, ТЭКЕШ, ОЛА-ЛАПОШ, ЛЭПУШУЛ-УНГУРАШ, ВИМА, РОГНА, ШИМИШНА, ГЫРБОУ, КИКЕШ, БРЕНЬ, СТЫНА, ЧЕМЕРЛЕ, БУНУМЬ, БОГДАНА ятлă пысăк ялсем тата МОЙСЧИУ, ФЕЛШО-ВИШО, ОЛШО-ВИШШО, КЭЦКЭУ, ГЫЛГЕУ, ИЛЯНДА-МАРЕ, ГЭРБЭУ, АГИРЕШ, СТЫНА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Югослави столицишĕн — БЕЛГРАД хулишĕн çапăçма пуçланă. БЕЛГРАД хулипе юнашар ларакан ялсенче пирĕн çарсем 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Болгари çарĕсем нимĕçсене хирĕç вăрçма пуçласа, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе тата пирĕн çарсемпе пĕрле çапăçса, Югослави çĕрĕнче НИШ хулипе чугун çул узелне, ЛЕЦКОВАС хулине тата ЛЕБАНЕ, ВРАНЬЕ, ГРОЛИЦА ятлă пысăк ялсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 93 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 57 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ИНСТЕРБУРГ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПĂННИ

Октябрĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци, йышлăн вĕçсе кайса, Хĕвелтухăç Пруссири Инстербург чугун çул узелне тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пула, чугун çул узелĕн территорийĕнче пушарсем тухнă. Тăшманăн çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонĕсемпе платформисем çуннă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе чугун çул çинче тăракан нимĕçсен виçĕ çар эшелонĕ сирпĕнсе кайнă. Çавăн пекех тата аэродром районĕнче те темиçе вăйлă взрыв пулнă.

☆ ☆ ☆

Рига хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла тапăнса пынă. Вабитэс-Ээрс кӳллин кăнтăр хĕрринче халăх пурăнакан вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пункта нимĕçсенчен тасатнă. Совет чаçĕсем тăшмантан 2 танк, 10 тупă, 40 пулемет, 220 автомашина, 3 боеприпас складĕ, авиаци моторĕсен складне тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан чугун çул эшелонне тытса илнĕ. Çавăн пекех тата 15 юсавлă катер тытса илнĕ. Рига хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем, тăшманăн инженери чăрмавĕсемпе минăсем лартса тухнă вырăнĕсене çĕнтере-çĕнтере тата гитлеровецсен контратакисене сире-сире ярса, 20 километр таран малалла кайнă. Нимĕçсем хушăри позицисенче çирĕпленсе лармa хăтланнă, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçман. Пирĕн подразделенисем нимĕçсен тылне кĕре-кĕре каяççĕ те гитлеровецсене хăюллăн атакăлаççĕ. Кун каçиччен тăшманăн 1.500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

Совет авиацийĕ нимĕçсен çапăçури речĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Пĕр авиачаçăн летчикĕсем Сложа чугун çул станцине тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пула, Сложа станцийĕнче çар хатĕрĕсем тиенĕ эшелон çĕмĕрĕлнĕ тата тăшманăн 16 автомашини çунса кайнă.

* * *

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Бистрица хулинчен çурçĕртерехре Сечелу ятлă ту хушăкĕшĕн хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Нимĕçсен горно-стрелковăй чаçĕсем питĕ лайăх позицисенче çирĕпленсе ларнă. Унти сăртсем совет чаçĕсене наступлени туса пыма питех те кансĕрлеççĕ. Çав районри хăшпĕр тусен çӳллĕшĕ 2.000 метра çитет. Пирĕн автоматчиксем вăрмансемпе пырса тăшман тылне тухнă та гитлеровецсене сасартăк атакăланă. Унтан совет боецĕсем ту урлă каçнă та нимĕçсемпе венгерсен çарĕсене Сечелу ялĕнчен хăваласа кăларнă. Çапла вара, Сальва хулипе Сечелу хушшинчи паха шоссе çулне тăшмантан тасатнă. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем Борша хулине туртса илнĕ. Çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра Чехословакипе Çурçĕр Трансильвани чиккинчен 20 километрта ларакан Олша-Вишшо чугун çул станцийĕ пур.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн 3 транспортне тата хăвăрт çӳрекен 3 десант баржине шыва путарнă.

* * *

Балтика тăрăхĕнче тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем нимĕç çарĕсем питĕ пысăк çухату тӳсни çинчен каласа кăтартаççĕ. Нимĕçсен 31-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 17-мĕш полкăн 13-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Франц Ленский çапла каласа кăтартнă: «Çулла 31-мĕш дивизие çĕнĕрен çынсем пухса çитерчĕç. Вара пире Германирен Балтика тăрăхне илсе килчĕç. Пĕр уйăх иртрĕ-и, иртмерĕ-и, — пирĕн дивизи çапăçма пултаракан дивизисен шутĕнчен тухрĕ. Пуринчен те вăйлăрах пире Гауя шывĕ патĕнче пыра-пыра çапрĕç. Эпир каялла хăвăрт чакса пытăмăр, анчах та вырăссем пире хăваласа çитсе иртсе кайрĕç. Кĕперсене сирпĕнтерсе янă пирки эпир хурана кĕрсе ӳкрĕмĕр. Çав тери хăраса ӳксе, пăтранса кайрăмăр. Пĕтĕмĕшпех çавăрса илес патне çитсен, дивизири артиллери полкĕ тата ытти чаçсем те çапăçура кирлĕ япаласемпе боеприпассене пĕтĕмĕшпех пăрахса хăварчĕç. Гауя шывĕн кăнтăр хĕрринче командовани оборона йĕркелеме хăтланчĕ, анчах та ку ĕçрен нимĕн те тухмарĕ. Пирĕн вырăссене нимĕнле хатĕр те пулмарĕ».

Нимĕçсен 37-мĕш дивизийĕнчи 2-мĕш строительнăй батальонран тыткăна лекнĕ салтак Генрих Крейцер çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн батальон лазарет тăватчĕ. Кĕтмен çĕртен вырăссем наступлени пуçласа ячĕç. Каç пулса килнĕ чухне бараксем патне аманнă салтаксемпе офицерсене тиенĕ машинăсем татти-сыпписĕр пыма пуçларĕç. Аманнисене тул çутăличченех турттарса тăчĕç. Ирхине пурне те халех тыла куçарма приказ килчĕ. Пирĕн батальон, темиçе çĕр аманнă салтака пăрахса хăварса, тарчĕ. Анчах та темиçе кун иртсен, эпир пурпĕрех тыткăна лекрĕмĕр».

Нимĕçсен 227-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 328-мĕш полкран тыткăна лекнĕ фельдфебель Ганс Кефер çапла каласа панă: «Вырăссен наступленийĕ пуçланса кайнă хыççăн 227-мĕш пехотнăй дивизи ытла та йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкрĕ. Пирĕн каялла чакма мĕн пурĕ те пĕртен-пĕр çул кăна тăрса юлчĕ, ыттисене пурне те вырăссем татса пăрахрĕç. 328-мĕш, 366-мĕш тата 412-мĕш полксен пур подразделенийĕсем те пĕртен-пĕр шоссе çулĕ çине ыткăнчĕç. Эпир пурте çав çул çине шанса тăнăччĕ. Анчах та вырăссен танкĕсем пирĕн тыла кĕрсе кайрĕç. Дивизие вара аркатса тăкрĕç».

ФЗО шкулĕсемпе училищĕсене вĕренме илмелли плана кашни районăн тултармалла

Çамрăксене ФЗО шкулĕсемпе ремесленнăй тата чугун çул училищисене вĕренме илмелли приэма пуçланнăранпа çур уйăх ытла иртрĕ. Тепĕр 14 кунтан приэм вĕçленет. [illegible]

[illegible]

Г. ПЕТРОВ.

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Нормăна тултарман рабочисем çук

СОВЕТСКОЕ. [illegible]

И. СИГАЙ.

Вунă кунри плана ирттерсе тултарнă

СĔМĔРЛЕ, октябрĕн 16-мĕшĕ (Телефонпа). «Большевик» заводăн коллективĕ [illegible]

МАЛТАНХИ ПИН ЦЕНТНЕР САХĂР

Харьков облаçĕнчи Первухинри тин кăна строя кĕнĕ сахăр завочĕ кăçал акса тунă сахăр кăшманĕнчен чи лайăх сахăрăн малтанхи пин центнерне туса кăларнă. Заводра сахăр кăшманĕн пысăк запасĕ пур. Çав кăшман Богодуховпа Краснокутск районĕсенчи колхозсенчен татти-сыпписĕр килсе тăрать. (ТАСС).

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомолăн Муркаш райкомĕ актив пухăвĕн решенийĕсене пурнăçламасть

[illegible]

Ф. МАЛЫШКИН.

Çамрăк сухаçăсемпе тракторчисен ăмăртăвне анлăнрах сарар

[illegible]

...хи куна район кĕрхи çĕртме планне 81,6 процент пурнăçланă. 18 колхоз кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Районĕпе кунсерен çак ĕçре 350—400 лаша тата 9 трактор ĕçлеççĕ. Район октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме планне пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн кĕрешет.

Етĕрне райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Шмелев юлташ районра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç вăрахăн пыни çинчен пĕлтерет. Ра- [illegible] мисе çын вĕренесси çак тарана çитсе те паллă мар. Елчĕк районĕнче çамрăксене правительство постановленийне ăнлантарса паман.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 16-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Çурçĕр енчен тата кăнтăр енчен наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем октябрĕн 15-мĕшенче Савойаарга-Плаатăн хĕвеланăç çыранĕнче пĕрлешнĕ. Ун хыççăн вара вĕсем Ватерфлит районĕнчи укрепленисене хăйсен аллинче тытса тăракан чăçсемпе пĕрлешме хĕвеланăçнелле наступлени пуçласа янă.

Антверпен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем, авиаци пулăшнипе, Вунсдрехт ялне йышăннă.

Голландире союзниксен çарĕсем савăлланса кĕнĕ районра хăшпĕр тĕлте Фирлингсбеек патнелле куçнă.

Аахен хули çумĕнчи ялсенче кашни çуртшăн çапăçаççĕ. Çав хуларан çурçĕртерехре, тăшман вăйлăн хирĕç тăнă пулин те, союзниксен çарĕсем малалла кайнă.

Вогез тăвĕ патĕнче союзниксен çарĕсем хĕвелтухăçнелле вăйлăрах наступлени тума пуçланă, тăшман хытă хирĕç тăрать пулин те, унта анлă фронтпа пăртак малалла кайнă, темиçе хулана ирĕке кăларнă.

Çулсен Баккар узелĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Глонвиль тата Фонтенуа хулисене тытса илнĕ. Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Фермифонтен хулине тăшмантан тасатнă (унта нумаях пулмасть хаяр çапăçусем пулса иртнĕ).

1.200 ытла йывăр бомбардировщик, истребительсен пысăк соединенийĕсем хÿтĕлесе пынипе, Кельн хулинчи вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Йывăр бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ Дюссельдорфран кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Ризенхольцпа Монгеймри нефть тасататакан заводсене тапăннă. Иртнĕ çĕрле Вильгельмсхафенри вăрçă базине тапăннă. Гамбургри объектсем çине те бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен вăтаçĕр тинĕс тавраш енчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Греци çыранĕ патĕнче шыври минăсене тытса темиçе кун ирттернĕ хыççăн, октябрĕн 15-мĕшĕнче каçхине Англипе Греци флочĕсен темиçе карапĕ Пирей бухтине кĕнĕ.

Çав судносем пурте çарсем тиесе пынă, вăл çарсен октябрĕн 16-мĕшĕнче ирхине çĕр çине анмалла пулнă.

Италире 5-мĕш армин Америка чаçĕсем кунĕпех пынă йывăр çапăçу хыççăн Ливерньяно хулине йышăннă.

Фронтăн Адриатика тинĕс хĕрринчи участокĕнче 8-мĕш арми чаçĕсем Гамбеттола хулине йышăннă.

Союзниксен вăтаçĕр тинĕс тавраш енчи авиацийĕ 1000 вĕçев ытла тунă.

Англи авиацийĕ Вильгельмсхафена тапăннă

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, çĕрле вĕçекен истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Германин тинĕс-çар бази пулса тăракан Вильгельмсхафен хулине тапăннă. Бомбардировщиксем çавăн пекех тата тăшманăн чылай аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Сербире темиçе кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн Югослави чаçĕсем Ниш хулине ирĕке кăларнă. Нимĕç гарнизонне пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтернĕ. Брегалница шывĕн улăхĕнче ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем, хĕвеланăçнелле чакакан нимĕçсене хăваласа пырса, Пехчево хулине ирĕке кăларнă. Халĕ Страцин хулишĕн хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Югослави халăхĕ совет çарĕсене питĕ савăнса кĕтсе илет

ЖЕНЕВА, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Ирĕклĕ Югослави» ятлă радиостанци çапла пĕлтерет:

«Сербипе Воеводинăран кашни кунах пирĕн халăх калама çук хавасланни çинчен, вăл Хĕрлĕ Çара савăнса кĕтсе илни çинчен, боецсене чечексем тата парнесем пани çинчен калакан çырусем килеççĕ. Ваттисем те, çамрăккисем те—пурте Хĕрлĕ Çарăн чапа тухнă паттăрĕсене пулăшма тăрăшаççĕ, çав паттăрсем халь, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн боецĕсемпе пĕрле кĕрешсе, пирĕн çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатса пыраççĕ. Вырăнти çынсем Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсене тăшман ăçталла кайни çинчен пĕлтереççĕ, ишнĕ çулсемпе кĕперсене тÿрлетеççĕ.

Румынире нациллĕ-демократиллĕ фронт тунă

БУХАРЕСТ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Трибуна Попорулуи» хаçат çапла пĕлтерет: октябрĕн 12-мĕшĕнче коммунистсен партийĕн, социал-демократиллĕ партин, çавăн пекех тата «Патриотсен союзĕн», «Çĕрĕç фрончĕн», пĕрлешÿллĕ профсоюзсен руководителĕсем нациллĕ-демократиллĕ фронт тăвас ыйтăва сÿтсе-явма пухăннă. Нациллĕ-демократиллĕ фронт платформин проектне Румынири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ туса хатĕрленĕ пулнă. Канашлăва национал-царанистла тата национал-либералла партисен представителĕсене те чĕннĕ пулнă, анчах вĕсенчен национал-либералла партин представителĕ кăна пынă. Вăл канашлу ĕçĕсене хутшăнман, канашлу пĕтиччен унтан тухса кайнă.

Канашлу пĕтнĕ хыççăн «Романия Либера» хаçатăн уйрăм номерне кăларнă, унта нациллĕ-демократиллĕ фронт туни çинчен пĕлтернĕ.

Октябрĕн 12-мĕшĕнче каçхине Лукрецкий Патрашкану тата Титель Петреску национал-царанистла партипе национал-либералла партин руководителĕсене çапла пĕлтернĕ: нациллĕ-демократиллĕ фронт туса хунă пирки, тăватă партирен тăракан нациллĕ-демократиллĕ блока салатса янă, тенĕ.

БУХАРЕСТ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Тимпул» хаçат нациллĕ-демократиллĕ фронтăн совечĕ пĕлтернине пичетлесе кăларнă, унта çапла каланă: октябрĕн 13-мĕшĕнче нациллĕ-демократиллĕ фронтăн делегацине король йышăнчĕ, тенĕ. Çав делегаци составĕнче Патрашкану, Георгиу, Лотар Радачану, Владеску-Ракосу профессор тата Виктор Брефтеляну пулнă.

Маниупа Братиануна нациллĕ-демократиллĕ фронт çумне пĕрлешес тĕлĕшпе панă сĕнÿ çине национал-царанистла тата национал-либералла партисен руководстви ответ паман пирки, нациллĕ-демократиллĕ фронтăн совечĕ ятарласа лару туса ирттерме палăртнă. Çав ларура нациллĕ-демократиллĕ коалицин çĕнĕ правительствине тăвас тĕлĕшпе татăклă сĕнÿсем палăртса хураççĕ.

«Трибуна Попорулуи» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нациллĕ-демократиллĕ фронт совечĕн делегацийĕ короле çапла каланă: фронт национал-царанистсене тата либералсене фронт составне кĕме ирĕк парать, тенĕ. Хаçат каланă тăрăх, делегаци çавăн пекех тата çакна та асăрхаттарса хăварнă: национал-царанистла тата национал-либералла партисем пĕрле ĕçлеме килĕшмесен, нациллĕ-демократиллĕ фронт çĕршыва тытса пырас ответлăха хăй çине илме пултарать, тенĕ.

НАЦИОНАЛ-ЦАРАНИСТСЕМПЕ НАЦИОНАЛ-ЛИБЕРАЛСЕМ НАЦИЛЛЕ-ДЕМОКРАТИЛЛЕ ФРОНТА ХУТШĂНМА КИЛĔШМЕН

БУХАРЕСТ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Семналул» хаçат çапла пĕлтерет: октябрĕн 13-мĕшĕнче ирхине Маниупа Дину Братиану канашлу туса ирттернĕ, çав канашлура национал-царанистсемпе национал-либералсен партийĕсен политикăллă позицине пăхса тухнă. Канашлăва хутшăннисем нациллĕ-демократиллĕ фронтпа нимĕнле çыхăну та тытмалла мар тесе туха-туха каланă.

Венгрири лару-тăру

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештри радио паракан пĕлтерÿсем тăрăх, Венгрире ĕнер пуçланнă политикăллă ĕçсем ытларах та ытларах çивĕчленсе пыраççĕ. Анчах илнĕ хыпарсем çĕршыври пĕтĕмĕшлĕ лару-тăру çинчен тĕрĕс выводсем тума май памаççĕ.

Венгрири Ференц Салаши пуç пулса тăракан гитлеровецсем Будапештри радиостанцине тытса илнĕ те çав станци урлă хăйсен чĕнĕвĕсемпе приказĕсене параççĕ. Радио тăрăх, сăмахран, Салаши хăйĕн правительствине туса хуни çинчен пĕлтернĕ. Кунпа пĕрлех Будапештри радио пĕлтернинчен çакă та уççăн курăнса тăрать: Салаши пуç пулса тăракан гитлерла «правительствăн» влаçĕ пысăках мар, ăна хирĕç Хортипе тата унăн правительствипе пĕр майлисем, çавăн пекех халăхăн анлă массисем вăйлăн тăраççĕ. Венгрин çĕнĕрен сиксе тухнă правителĕсене хирĕç Будапештра забастовка пуçланнă. Будапештри полици начальникĕ радио тăрăх приказ панă. Çав приказра рабочисемпе служащисене ĕçе каялла таврăнса, «ырă кăмăллăн» ĕçлеме хушнă, забастовкăна малалла та тăсса пырсан, «çирĕп мерăсем» йышăнассипе хăратнă.

Будапештри полицин шефĕ кăларнă тепĕр приказра çакă курăнса тăрать: столицăри рабочисемпе служащисен забастовкине суту-илÿ предприятийĕсемпе заведенийĕсен хуçисем пулăшса тăраççĕ. «Мĕнпур магазинсен хуçисем халех сутă тума тытăнма тивĕçлĕ. Çак распоряжение пăсакансене çирĕп ответ тыттармалла пулать», — тенĕ приказра.

Администраци кăларакан распоряженисене сарас ĕçре радиопередачăсемпе вăйлăн усă курни Салашипе унăн помощникĕсен аллинче халăхпа çыхăнмалли ытти майсем е пачах та çук, е сахал тесе шухăшлама май парать.

Салаши «правительствине» хирĕç тăнисем, Будапештсăр пуçне, Венгрин ытти районĕсенче те пулнă. Çакă вăл «Çурçĕр-хĕвелтухăç Карпатри вăрçă зонин комиссарĕ» радио тăрăх панă приказран та курăнса тăрать. Приказ урамсенче тата обществăллă вырăнсенче виçĕ çынтан пысăкрах ушкăнсемпе пухăнса тăма чарать. Çынсене каçхине 8 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен хăйсен килĕсенчен тухма чарнă. Çав вăхăт хушшинче мĕнпур çуртсен хапхисемпе алăкĕсене питĕрсе тăратмалла.

Приказра малалла çапла каланă: «Çак йывăр самантра лăпкăлăха сыхламан çынсене е хăйсене тивĕçлĕ пек тыткаламан çынсене хирĕç хĕçпăшаллăпа усă курмалла пулать, тенĕ.

Хорти хальхи вăхăтра ăçта пурăнни пирки нимĕнле хыпар та çук.

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештри радио пĕлтернĕ тăрăх, Венгрири гитлеровецсен лидерĕ Ференц Салаши тунă «правительствăна» премьер-министрăн заместителĕ пулса — Ене Сельдоши, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса — барон Габор Кемень, шалти ĕçсен министрĕ пулса — Габор Вайна, çĕрĕç министрĕ пулса — граф Фидел Палффи, оборона министрĕ тата генштаб начальникĕ пулса — генерал Кароль Берецки тата ыттисем те кĕнĕ.

Салаши Будапештри радио тăрăх хăй вăхăтлăха регент полномочийĕсене илни çинчен пĕлтернĕ. Кун хыççăн Салаши: эпĕ регент советне туса хутăм, тенĕ, çав совета генерал-полковник Кароль Берецки, Ференц Райниш тата Шандр Чиа кĕнĕ пулать.

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештран юлашки вăхăтра панă радиопередачăсем Салаши «правительствин» лару-тăрăвĕ çирĕп марри çинчен калаççĕ. Халăх унăн «правительстви» çине тивĕçлипе шанманнине пула, Салаши «правительстви», хăйĕн аллинчи радиовещанипе усă курса, хăйĕн лару-тăрăвне çирĕплетес шутпа тĕрлĕ ултавлă та суя ĕçсем туса хăтланать. Паян çурçĕр тĕлнелле Будапештри радио Хорти каланă сăмах пек туса уйрăм передача панă. Çав сăмахра Хорти хăй ĕнер регент ячĕпе панă посланине пăрахăçлать пулать вара.

Çакна май ĕнтĕ Вереш генералăн малалла кĕрешме чĕнсе калакан, Будапештри радио ĕнер панă приказĕ пирки те иккеленмесĕр тăма çук.

БУДАПЕШТРИ ÇЫНСЕМ ШИКЛЕНСЕ УКНĔ

АНКАРА, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Анатоли агентствин корреспонденчĕ Будапештран пĕлтернĕ тăрăх, Венгри столицинче çав тери вăйлă паника пуçланнă. Будапешта фронтран килекен хыпарсем кунти шикленÿлĕхпе паникăна татах та ытларах ÿстереççĕ, тесе çырать корреспондент.

Халăх хушшинчи культурăллă çутĕçĕн задачисем

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче хĕрĕх уйăха яхăн ĕнтĕ хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, хамăрăн генийллĕ полководец, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, фашизмăн хура вăйĕсене аркатса пырса, историллĕ чаплă çĕнтерÿсем турĕ. Сталин юлташ Совет çĕрне фашистла захватчиксенчен тасатса çитерес тĕлĕшпе лартнă задачăна Хĕрлĕ Çар ĕнтĕ пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пурнăçа кĕртрĕ, халĕ вăл тепĕр задачăна — Европăри халăхсене гитлерла пусмăртан ирĕке кăларас задачăна пурнăçа кĕртме тытăнчĕ.

Совет стройĕ тĕнчере хăй чи çирĕп строй пулнине кăтартса пачĕ. Вăл мирлĕ строительство çулĕсенче çĕршыва экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çĕклессине организацилемелли чи лайăх форма кăна мар, çавăн пекех тата тăшмана хирĕç тăма халăхăн мĕнпур вăйĕсене мобилизацилемелли чи лайăх форма та пулса тăчĕ.

Большевиксен партийĕ, унăн çулпуçĕ Сталин юлташ чĕннипе мĕнпур совет халăхĕ хăйĕн социализмлă Тăван çĕршывне, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлеме çĕкленчĕ. Совет тылне Сталин юлташ ертсе пыни, пĕтĕм хуçалăха социализмлă план тăрăх тытса пыни, çĕршыва индустриализацилени тата ялхуçалăхне коллективизацилени, миллионшар совет çыннисен патриотизмĕ, вĕсем хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр паттăррăн ĕçлени, пирĕн халăхăн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ, рабочи класла хресченсен тата интеллигенцин иксĕлми çирĕп союзĕ, — çаксем пурте ĕнтĕ Хĕрлĕ Çара Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче аслă çĕнтерÿсем тума май пачĕç. Фашистсен шăлĕсем пирĕн Тăван çĕршывăн çирĕплĕхĕ çине пырса тăрăнса арканса кайрĕç.

Ленин-Сталин партийĕ пирĕн халăха мĕнпур этемлĕхĕн ылханлă тăшманĕпе — нимĕç фашизмĕпе кĕрешме организацилерĕ, çав кĕрешĕве вăл пуçарса, ертсе пырать.

Миллионшар совет çыннисем, вăл шутра пирĕн чăваш халăхĕ те, историллĕ задачăна — çĕр çинче фашизма пуçĕпех çапса аркатса пĕтерсе тăкас задачăна пурнăçа кĕртнĕ çĕре ăнланулăн хутшăнса пыраççĕ. Вĕсем вăрçă фрончĕсенче тата пĕтĕм тĕнчере пулса иртекен событисемпе интересленеççĕ, çав событисене тимлĕн сăнаса тăраççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ, вăрçă ĕçĕсем мĕнле пынине картăсем тăрăх пăхса пыраççĕ, хамăрăн пархатарлă та чаплă тĕллеве пурнăçа кĕртес тесе, вĕсем нимĕн те хĕрхенсе тămаççĕ.

«Государство халăх ăнлануллă пулнипе вăйлă, — тесе çырнă Ленин. — Эпир вăрçă вăрçма пултаратпăр, мĕншĕн тесен массăсем хăйсем мĕншĕн вăрçнине пĕлеççĕ, вĕсем, çав тери пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, вăрçа малалла туса пырассишĕн тăраççĕ».

Пирĕн парти организацийĕсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче ĕççыннисен политикăллă ăнланулăхĕпе активлăхне ÿстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕç, вăрçăпа хуçалăх тата политика задачисене çине тăрса пурнăçа кĕртсе пычĕç, çапла вара фронтпа çĕршыва вăйлăнрах та вăйлăнрах пулăшса пычĕç.

Ĕççыннисен политикăллă ăнланулăхĕпе активлăхне ÿстерес ĕçре ялти политпросвет учрежденийĕсем — вулав çурчĕсемпе клубсем тата библиотекăсем пĕчĕк вырăн мар йышăнса тăнă, йышăнса тăраççĕ те. Пирĕн республикăра 621 вулав çурчĕ, ялсенче 200 ытла клуб, район центрĕсенче 28 культура çурчĕ, 28 библиотека тата ялсенче 61 библиотека ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем халăх хушшинче культурăллă-политикăллă ĕçе ăнăçлăн туса пыраççĕ. Акă, сăмахран, Куславкка районĕнчи Карач вулав çуртне илер. Унăн заведующийĕ пулса И. С. Федоров коммунист ĕçлет. Вулав çурчĕн виçĕ пÿлĕмрен тăракан ятарласа тунă çурт пур. Вулав çуртне шалтан лозунгсемпе, плакатсемпе, çулпуçсен портречĕсемпе илемлетнĕ, унта сĕтел-пукансем те çителĕклĕ. Çынсем вулав çуртне юратса çÿреççĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче библиотека пур. Библиотека валли «Правда», «Чăваш Коммуни», «Красная Чувашия» хаçатсем, «Спутник агитатора», «Политпросвет работник», «Крестьянка» журналсем çырăнса илнĕ. Вулав çуртĕнче колхозри ăмăрту мĕнле пынине кăтартмалли хăма, хаçат витрини, шашкăсемпе домино тата ыттисем те пур. Вулав çурчĕн 11 çынтан тăракан совет ĕçлет. Советăн кашни членне уйрăм ĕç панă. Вулав çурчĕ хăй тавра 49 çынтан актив явăçтарнă. Çавăн пекех кунта ĕççыннисене тĕрлĕ ыйтусем тăрăх справкăсем паракан сĕтел те ĕçлет. Вулав çурчĕ колхозниксем хушшинче тăтăшах докладсемпе калаçусем тата вулавсем туса ирттерет, стена хаçачĕсем кăларса тăрать. Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕччен вулав çурчĕ политика ыйтăвĕсемпе 15 доклад тата нумай калаçусем ирттернĕ, 27 номер стена хаçачĕ кăларнă. Вулав çурчĕ çумĕнче агротехникăпа художествăллă пултарулăх кружокĕсем ĕçлеççĕ. Кунти колхозниксемпе колхозницăсем çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсене яланах лайăх пĕлсе тăраççĕ. Çавăнпа та вĕсем вара, фронта пулăшас тесе, вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеççĕ, государство умĕнчи хăйсен обязательствисене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Кун пек вулав çурчĕсем республикăра сахал мар. Вĕсенчен Елчĕк районĕнчи Сăръел, Вăрнар районĕнчи Кольцовка, Калинино районĕнчи Алгазино, Красноармейски районри Именкасси тата ытти вулав çурчĕсене те палăртмалла.

Ялти клубсем те чылайĕшĕсем начар мар ĕçлеççĕ. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз клубĕ çумĕнче агротехника, драма тата хор кружокĕсем организациленĕ. Кунта лекцисемпе докладсем тăтăшах туса ирттереççĕ, киносемпе спектакльсем кăтартас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Клуб, колхозăн Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи çитĕнĕвĕсене кăтартса парас тесе, ялхуçалăх выставки организациленĕ. Выставкăра «Кашни гектартан 100-шер пăт тырпул туса илетпĕр», «Тырпулшăн кĕрешни — тăшмана çĕнтерессишĕн кĕрешни», «Уйхирсене удобрени тăкса тата лайăх ĕçлесе çемçетни — вăйлă тырпулăн никĕсĕ», «Тырпула сиенлекен хурткăпшанкăсемпе тата çумкурăксемпе кĕрешни — вăйлă тырпулшăн кĕрешни», «Ялхуçалăхĕнче эпир тунă çитĕнÿсем» ятлă пайсем пур.

Выставкăра колхозăн çитĕнĕвĕсене кăтартса паракан нумай тĕрлĕ экспонатсемпе таблицăсем кăларса тăратнă. Сăмахран, колхозри 6-мĕш бригада кăсалхи çут

кашни гектартан 24 центнер ыраш, 27 центнер сĕлĕ туса илнĕ. Колхоз уйхире 7.190 лав тислĕк, 120 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 142 центнер кĕл, 660 центнер суперфосфат, 570 центнер сульфат-аммони, 450 центнер кали тăварĕ, 558 центнер фосфорит çăнăхĕ тăкнă. Колхоз мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра та пахалăхлăн туса ирттернĕ, çапла вара вăл вăрçă вăхăтĕнче вăйлă тырпул туса илсе, ăна вăхăтра пухса кĕртнĕ, государство умĕнчи хăйĕн пĕтĕм обязательствисене срокчен парса татнă. Çаксене пурне те выставкăра тĕплĕн кăтартса панă.

Партин районри комитечĕ çак колхозăн опытне сарас шутпа, «Дружба» колхозра колхоз председателĕсен тата агитколлектив руководителĕсен темиçе канашлăвне туса ирттернĕ.

Çавăн пекех Çĕрпÿри социализмла культура çурчĕ, пĕр заводăн клубĕ тата ытти клубсемпе культура çурчĕсем лайăх ĕçлеççĕ.

Район центрĕсенчи тата ялсенчи чылай библиотекăсен ĕçне лайăх енĕпе палăртма пулать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ, «Чăваш республикинчи культурăллă-çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕ çинчен» постановлени йышăнса, пире пысăк пулăшу пачĕ. Сăмахран, Вăрмар районĕнче партин Центральнăй Комитечĕ постановлени йышăначчен пĕтĕмпе те 6 вулав çурчĕ кăна ĕçленĕ, халĕ вара 20 вулав çурчĕ ĕçлеме тытăннă.

Анчах çапах та ялти ĕççыннисем хушшинче культурăллă çутĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Партин хăшпĕр райкомĕсем, сăмахран, Советски, Сĕнтĕр, Сĕнтĕрвăрри, Ишлей райкомĕсем ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Обком бюровĕн культурăллă-çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕ пирки йышăннă постановленийĕсене халиччен те пурнăçа кĕртмен. Советски районра кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри вулав çурчĕсенчен çуррине яхăн ĕçлемесĕр ларнă. Ку енĕпе халĕ те нимĕнех те туман-ха. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сутчевăри, Ольтикассинчи вулав çурчĕсем тата районри культура çурчĕ питĕ япăхса кайнă. Ольтикасси вулав çуртне тырă хурса тултарнă. Атлашевăри колхоз клубне пăрса хунă, районри культура çуртĕнчи вулав пÿлĕмне Спиртзавод сĕлĕ хунă. Çав киревсĕр ĕçсем район руководителĕсен куçĕ умĕнчех пулса иртеççĕ, вĕсем политпросвет учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ку тарана çитсе нимĕн те туман. Çакна ăна политикăллă çутĕçе район руководителĕсем хакламаннипе, парти решенийĕсем çине пачах та ответсăррăн пăхнипе кăна ăнлантарса пама пулать. Çавăн пек киревсĕр ĕçсене халех пĕтермелле, партин Центральнăй Комитечĕпе Обком бюровĕн çак тĕлĕшпе йышăннă решенийĕсене вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртмелле.

Политпросвет учрежденийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тата вĕсене хĕле лайăх хатĕрлес шутпа, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ октябрĕн 15-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче республикăри политпросвет учрежденийĕсен ĕçне обществăллă организацисем енчен пăхса тухассине ирттерме йышăнчĕ.

Çав ĕçе ертсе пыма ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кашни районрах парти райкомĕпе ВЛКСМ райкомĕн, райисполкомăн, районри çутĕç пайĕн, райхаçат редакцийĕпе профсоюз организацийĕсен представителĕсенчен комисси тума хушрĕ. Обком бюровĕ политпросвет учрежденийĕсен ĕçне пăхса тухмалли условисене çирĕплетрĕ тата ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсене çав решение тĕплĕн сÿтсе-явса, политпросвет учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушрĕ.

Политпросвет учрежденийĕсен ĕçне пăхса тухнă вăхăтра палăрнă çитменлĕхсене пурне те пĕтермелле, районри кашни культура çуртне, вулав çуртне, библиотекăна лайăх ĕçлекен тумалла, вĕсене ертсе пыма политика тĕлĕшĕнчен лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ тата хăйсен ĕçне юратакан çынсене уйăрса лартмалла, кашни клуба, вулав çуртне, библиотекăна шалтан та, тултан та тĕплĕн юсаса йĕркелемелле, вĕсене хĕле кĕме хатĕрлесе çитермелле.

1944 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн партин Центральнăй Комитечĕ ĕççыннисем хушшинче наукăпа çутĕç пропагандине организацилесси çинчен ятарласа постановлени йышăнчĕ. Центральнăй Комитет халăх хушшинче наукăпа çутĕç пропагандине сарасси çине парти организацийĕсем тата союзлă республикăсенчи Çутĕç Халăх Комиссариачĕсем юлашки вăхăтра çителĕксĕр çавăрăнса пăхнине палăртрĕ. Çутĕç органĕсемпе наука учрежденийĕсем халăх хушшинче çутçанталăкпа ăслăлăх ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем ирттерес ĕçе организацилемеççĕ. Издательствăсем çутçанталăкпа ăслăлăх ыйтăвĕсемпе пурне те ăнланмалла литература кăлармаççĕ, хаçат-журналсем ку енĕпе статьясем пичетлемеççĕ. Çутçанталăкпа ăслăлăх темисемпе курса вĕренмелли пособисем, кино-картинăсемпе радиопередачăсем çук.

Партин Центральнăй Комитечĕ ĕççыннисен анлă массисен культурăллă виçине малалла ÿстерсе пырас тата вĕсем хушшинчи культурăсăрлăхпа тĕшмĕшлĕх юлашкийĕсене пĕтерес ĕçре çутçанталăкпа ăслăлăх пĕлĕвĕсене малалла сарса пыни хальхи тапхăрта уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать тесе шутлать. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн решенийĕ тăрăх, парти Обкомĕн бюровĕ кăçалхи октябрĕн 11-мĕшĕнче ятарласа постановлени йышăнчĕ. Обком парти горкомĕсемпе райкомĕсене, çутĕç органĕсене, комсомолпа профсоюз организацийĕсене, ăслăлăхпа культура тата çутĕç учрежденийĕсене, Чăвашгизпа Радиокомитета ĕççыннисем хушшинче çутçанталăкпа ăслăлăх пĕлĕвĕсене сарас ĕçе анлăн организацилеме, çак ĕçе вырăнти интеллигенцин вăйĕсене анлăн явăçтарма хушса хăварчĕ.

Çутçанталăкпа ăслăлăх ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе калаçусем ирттермелли темăсене парти райкомĕсемпе горкомĕсене кăтартса панă. Вĕсен çак ĕçе пуçарса тата куллен организацилесе пымалла, халăх хушшинче ăслăлăхпа çутĕç пропагандине сарас тĕлĕшпе конкретлă мероприятисем палăртмалла.

Пирĕн задача — кашни совет çыннин ăнланулăхне татах та ытларах ÿстересси, ăна пирĕн историллĕ задачăсем çине ăнлануллăн пăхма вĕрентесси, пирĕн халăх фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан кĕрешĕве татах та активлăнрах явăçтарасси пулса тăрать. Çакă пуриншĕн те паллă: кашни совет çыннин ăнланулăхĕ мĕн чухлĕ пысăкрах, кĕрешĕве те вăл çавăн чухлĕ хастарлăнрах хутшăнать, пирĕн тăван çĕршывăн вăрçăри хăвачĕ çавăн чухлĕ пысăкрах пулать, Хĕрлĕ Çар тăшмана çавăн чухлĕ хăватлăнрах пыра-пыра çапать, эпир тăшмана пуçĕпех çапса аркатас кун çавăн чухлĕ çывăхрах пулать.

И. К. ИВАНОВ,
ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00747. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.